24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ЯНВАРЬ 3 ШАМАТКУН 2(6027) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ М. И. КАЛИНИН ЮЛТАШ ÇĔНĔ ÇУЛ ЯЧĔПЕ КАЛАНĂ САМАХ

ХАКЛĂ ЮЛТАШСЕМ!

Совет Союзĕнчи граждансем, рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, совет интеллигенцийĕ!

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем!

Партизансемпе партизанкăсем!

Вăхăтлăха нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем тытса илнĕ совет районĕсенче пурăнакансем!

Сире Çĕнĕ çул ячĕпе сывлăх сунса саламлама ирĕк парăр. Çĕнĕ çул çитнĕ май сире вăрçă итогĕ çинчен кĕскен каласа пама ирĕк парăр.

Ултă уйăх ытла ĕнтĕ пирĕн çĕршыв нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç йывăр тата юн тăкăнакан вăрçă туса пырать. Çак вăрçа пире нимĕç империалисчĕсем туртса кĕртрĕç.

Пирĕн çар, унпа пĕрле пирĕн пĕтĕм халăх, йывăр вăхăта тӳссе ирттерчĕ. Хĕрлĕ Çар геройла çапăçрĕ. Анчах та тăшман, малтанхи вăхăтра вăрçăри пуçарулăха хăй аллине илсе, пирĕн вăйсăртарах вырăнсене шыраса, малалла куçса пычĕ, пирĕн хуласемпе ялсене йышăна-йышăна илсе, пирĕн мирлĕ халăхран уголовник пек вăрă-хурахла ĕçсем туса мăшкăлларĕ.

Тăшмана эпир пурпĕрех çапса çĕмĕрессине пирĕн халăх хушшинче те, çарта та пĕр минутăлăха та иккĕленӳ пулман. Анчах нимĕç вăрă-хурахĕсем пирĕн çĕр çинче çӳрени, вĕсем пирĕн халăхран мăшкăллани, пирĕн ватă çынсене, хĕрарăмсемпе ачасене чăтма çук асаплантарни пирĕн халăха хытă тарăхтарчĕ, унăн чĕрери кăмăлне пырса тиврĕ. Нимĕç фашисчĕсем совет çĕрĕ çинче тискер те ирсĕр ĕçсем нумай турĕç. Ялсемпе хуласенче пурăнакан çынсен чĕрисем нимĕç фашисчĕсене тавăрас кăмăлпа çунаççĕ. Украинецсемпе белоруссем, Балтика таврашĕнчи республикăсенче пурăнакан халăхсем хăйсем патне çывăх вăхăтрах Хĕрлĕ Çар пырса çитессине, хăйсене фашистсен тамăкĕнчен хăтарассине чунтанах, хĕрӳллĕн шанса тăраççĕ.

Çав пысăк та йывăр испытани кунĕсене совет халăхĕ çирĕппĕн тӳссе ирттерчĕ. Хăйĕн тăван çĕршывне кăкăрпа тăрса хӳтĕлесе хăварма, тăшмана пĕтерсе тăкма совет халăхĕ фронта хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене çĕршер пин ячĕ. Нимĕçсене хирĕç пыракан вăрçă пирки вăхăтлăха тухса тăнă йывăрлăхсемпе асапсене совет çыннисем çавтери чăтăмлăн тӳссе ирттерсе пычĕç.

Юлташсем, красноармеецсемпе командирсем тата политработниксем! Эсир пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе савăнтармалла ăста та геройла çапăçнине пула халĕ тăшмана чарса лартнă. Еçе татса паракан фронтсенче тăшмана хытах тата витĕмлĕнех пырса çапнă.

Совет Союзĕ çине Гитлер ултавлăн та кĕтмен çĕртен килсе тапăнмаи пулсан, нимĕçсем пире хирĕç туса пыракан вăрçăра вăхăтлăх ăнăçусем те тăвайман пулĕччĕç.

Эсир пурте пĕлетĕр, пирĕн çĕршыв çине Германия вăрă-хурах пек кĕтмен çĕртен, кĕтесрен сиксе ӳксе тапăнчĕ,—тĕрĕссипе пирĕн çине тапăнма Германин, сăхă агресси туса çаратма хапсăнакансĕр пуçне, урăх нимĕнле сăлтав та пулман.

Пирĕн çине кĕтмен çĕртен килсе тапăннă пирки Германи çарĕн малтанхи ĕçĕсем чылай ăнăçлăрах пулса пынă. Эсир пурте лайăх пĕлетĕр, çар вăйне мобилизацилеме тата ăна çапăçăва хатĕрлесе тăратма чылай вăхăт кирлĕ. Тăшман пирĕн çĕршыв çине хăйĕн хĕçне çĕклесен, çав хĕç айĕнче çар вăйне мобилизацилеме тата ăна çапăçăва хатĕрлесе тăратма боецсен çавтери пысăк хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ тата вĕсен çавтери пысăк çирĕплĕхĕ кирлĕ пулчĕ тата, эпĕ çакна калăттăм, уйрăмăнах командовани хăйĕн ĕçне питех те ăста туса пыни кирлĕ пулчĕ.

Кĕтмен çĕртен килсе тапăнса Германин пуçпулса тăракан ушкăнĕ пирĕн совет халăхĕн захватчикĕсене хирĕç кĕрешес вăй-хăватне хавшатма, Хĕрлĕ Çара таптаса, сирсе пăрахма, промышленноçа тытса илме, Совет Союзне шăйлаcа пĕтерсе тăкма, пирĕн ирĕклĕхе юрататакан мăнкăмăллă халăхсене чура туса хума шутланă. Анчах та Германин пуçпулса тăракан ушкăнĕн çав шухăшĕсем путланса ларчĕç.

Совет войскисем хамăр тăван çĕршывăн кашни пусăмне çавтери вăйлăн хӳтĕлесе пычĕç, таттисыпписĕр çапăçса противникăн вăйне хавшатса пычĕç, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере пычĕç.

Çĕнĕ çул пирĕн малашлăх лайăх пуласси çине курса тăнипе пуçланать. Фронтăн чылай пайĕнче Хĕрлĕ Çар хĕссе пынипе тăшман каялла чакать, нумай çĕрте тăшман, хăйĕн танкĕсене, туппиcене, пулемечĕсене тата ытти çар пурлăхĕсене пăраха-пăраха хăварса, нимĕн йĕркесĕр тарать. Тăшман пăрахса хăваракан çар хатĕрĕсен шучĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пырать.

Пирĕн красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем йывăр çул тăрăх утса тухрĕç. Анчах та умра пысăк йывăрлăхсем тăраççĕ-ха. Шартлама сивĕре тата тарăн юрсем тăрăх наступлени тăвасси пирĕнтен питех те нумай вăй хума, пĕтĕм хăвата пĕтĕçтерме ыйтать.

Сире акă мĕн хавхалантарса тăмалла. Сирĕн хĕçпăшалăн вăйне кура тăшманăн ирĕксĕрех каялла ытăнма лекет, тăшмана хирĕç эпир унпала пĕр пек условисенче çапăçатпăр, халĕ ĕнтĕ çапăçури пуçарулăха эпир тăшман аллинчен туртса илтĕмĕр.

Пирĕн тăван çĕршывăн кунçулне, унăн халăхĕн пурнăçĕпе малашлăхне, пĕтĕм Европăн кунçулне татса паракан çак çапăçура пĕр обстоятельство питех те паллă пулса тăрать. Çак çапăçура нимĕçсен фашистла çарне хирĕç пирĕн Хĕрлĕ Çар пĕр пĕччен пулса çапăçать, йывăр та юн тăкăнакан çапăçура тăшмана халран ярать, ăна вăйлăн пыра-пыра çапать.

Çирĕм кун каярах Хĕрлĕ Çар фронтăн чылай участокĕсенче активлă оборона туса пынинчен куçса, тăшманăн войскисем çине наступлени пуçласа ячĕ. Çак вăхăт хушшинче геройла Хĕрлĕ Çар Дон çинчи Ростов, Тихвин, Елец, Рогачев, Клин, Яхрома, Солнечногорск, Истра, Венев, Сталиногорск, Михайлов, Епифань, Ливны, Ефремов, Верховье, Дубна, Богородицк, Калинин, Высоковск, Волово, Алексин, Щекино, Руза, Таруса, Волоколамск, Плавск, Будогощь, Черепеть, Одоево, Наро-Фоминск, Белев, Лихвин, Високиничи, Новосиль, Тим, Козельск, Угодски завод, Керчь, Феодосия, Калуга хулисемпе ытти хуласене нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларчĕ.

Нимĕçсем оккупациленĕ ытти совет хулисене те нимĕçсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларас вăхăт инçех мар пулĕ, тесе шутлатăп эпĕ.

Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре пирĕн вăйсем ӳссех пыраççĕ. Тăшмана пурпĕрех çĕнтерессине эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр. Хăçан та хăçан пирĕн совет çĕршывне таптакан гитлеровецсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, вĕлерсе пĕтеретпĕр, хăçан та хăçан эпир хĕртнĕ тимĕрпеле гитлеризма çунтарса пĕтерсе тăкатпăр, совет çынни çавăн чухне тин лăпланма пултарнине эпир пĕлсех тăратпăр.

Пирĕн çĕнтерĕвĕн шанчăкĕ, эпир Гитлерăн çарне çĕмĕрсе тăкассин шанчăкĕ совет войскисем мĕнпур фронтсенче тунă малтанхи çитĕнӳсем пулса тăраççĕ.

Çакна ăна пирĕн фронта пырса тăракан резервсем шанчăк парса тăраççĕ.

Çакна ăна пирĕн пĕтĕм çĕршыв фронт валли, çĕнтерӳ тăвас ĕç валли геройла ĕçлени шанчăк парса тăрать.

Урса кайнă тăшмана пĕтерсе тăкма, Германи фашизмĕ чуралантарнă мĕнпур халăхсене ирĕке кăларма пирĕн Хĕрлĕ Çара пирĕн çарăн çулпуçĕ Сталин юлташ иксĕлми çирĕп ертсе пыни пирĕн çĕнтерĕве шанчăк пырса тăрать.

Хаклă юлташсем! Совет Союзĕн гражданĕсемпе гражданкисем! Боецсемпе командирсем тата политработниксем! Совет правительствипе пирĕн Ленинла партин Центральный Комитечĕ хушнипе эпĕ сире Çĕнĕ çул ячĕпе сывлăх сунса саламлатăп тата çĕнĕ, 1942 çулта пирĕн çавтери курайман ылханлă тăшмансене — нимĕç захватчикĕсене нимĕн юлмиччен çапса çĕмĕрсе, пĕтерсе тăкма пĕтĕм совет халăхне ырă сунатăп.

Çĕнĕ çул ячĕпе ырлăх сунатăп сире, юлташсем!

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

305-мĕш стрелковăй полка тата 881-мĕш артиллери полкне Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фрончĕсенче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн **305-мĕш стрелковăй полка** тата **881-мĕш артиллери полкне Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль,
1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Нимĕçсен войскисем çĕнĕ рубежсенче çирĕпленсе ларма хăтланнисене çĕмĕрсе пырса, пирĕн войскăсем чылай участоксенче малалла куçса пынă, халăх пурăнакан чылай пунктсене, çав шутра **Калуга** хулине тата чугунçул çинчи **Новые Кириши** ятлă пысăк узела йышăнса илнĕ. Çапăçусем вăхăтĕнче противникăн техникипе чĕрĕ вăйне нумай пĕтерсе тăкнă.

Декабрĕн 30-мĕшĕнче нимĕçсен 4 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн авиачасть нимĕçсенне 5 танк, икĕ бронемашина, войскăсемпе грузсем турттаракан 190 автомашина, темиçе оруди, боеприпассем турттарса пыракан лавсене 90 яхăн, горючи турттарса пыракан автоцистернăна пĕтерсе тăкнă, чугунçулсем çинчи 8 эшелона çунтарса янă, чылай вырăнсенче чугунçул линийĕсене çĕмĕрсе тăкнă тата тăшман похитин икĕ батальонне саппаласа янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче нимĕçсем темиçе çĕрте хаяр контратакăсем тума тытăнса пăхнă. Пирĕн боецсем противника каялла хăваласа янă, противника пысăк сухатусем кӳнĕ. Пирĕн боецсем противника хăваласа пырса халăх пурăнакан 8 пункта йышăнса илнĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 13 оруди, 42 пулемет, 31 автомашина, 34 мотоцикл, 184 велосипед тата снарядсем нумай тытса илнĕ. Хĕвеланăç фронтĕнчи тепĕр участокра пирĕн пĕр часть пĕр кун хушшинчи çапăçусенче халăх пурăнакан 15 пунктран нимĕçсене хĕссе кăларнă, тăшманăнне 4 оруди, 7 пулемет, 34 автомашина, 6 трактор тата 1000 снаряд тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Белов юлташăн танковăй чаçĕ икĕ эрне хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 70 танк, 5 самолет тата 24 оруди пĕтерсе тăкнă. Çак вăхăт хушшинчех хăюллă та паттăр танкистсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 8 автомашина, 5 оруди, 100 велосипед тата снарядсемпе минăсем темиçе пин тытса илнĕ.

* * *

Гурово ялĕнчи пĕр çурт ăшне пытанса ларнă нимĕçсем пирĕн наступлени туса пыракан боецсем çине персе тăнă. Юланутлă разведка взвочĕн командирĕ кĕçĕн лейтенант Журавлев çав çурт патне шăппăн пырса хăюллăн кĕрсе кайнă та нимĕçсене парăнма хушнă. Пилĕк салтакĕ хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахса аллисене çӳлелле çĕкленĕ. Унтер-офицерпа ефрейторĕ Журавлев юлташа хирĕç çапăçма пуçланă. Пирĕн паттăр командир автоматран персе вĕсене иккĕшне те амантнă. Хăйсен ирĕкĕпех парăннă салтаксемпе пĕрле вĕсене иккĕшне те тыткăна илнĕ.

* * *

Норвегири паллă патриот Х. Ларсэн ертсе пыракан партизансен отрячĕ çинчен чылай вăхăт хушши пĕлтерӳсем пулманччĕ. Çак мухтавлă отрядăн боевой ĕçĕсем çинчен халĕ информаци илнĕ. Х. Ларсэн ертсе пыракан партизансем фашистла оккупантсене хирĕç пĕрмаях çапăçса пынă. Декабрь уйăхĕнче вĕсем нимĕçсен Мурманск енче çапăçакан чаçĕсен тылĕнчи организацийĕсем çине темиçе хутчен те тапăннă. Нимĕçсемпе финсене хирĕç çапăçса вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 4 радиостанци, 11 пулемет, 29 автомат тытса илнĕ, боеприпассем усракан склада сирпĕнтерсе янă тата продовольстви усракан темиçе базăна çунтарса янă. Л. юханшыв патĕнче партизансем нимĕçсене вăйлăн пырса çапнă. Çав вырăнта нимĕçсен батальонĕ çĕр каçма вырнаçнă пулнă. Партизансем йĕлтĕрсемпе противник патне шăппăн пырса çитнĕ те противникăн часовойĕсене вĕлерсе тăкнă. Ун хыççăн пулеметсем вырнаçтарса тухса сигнал тăрăх пурте пеме тытăннă. Нимĕçсем хушшинче паника пуçланнă. Фашистсен пĕр группи юханшыв патнелле тарса тухасшăн пулнă, анчах партизансем гранатăсем ывăтса нимĕçсене пĕтерсе тăкнă. Х. Ларсэнăн партизанĕсем çак çапăçура нимĕçсен 121 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Вилнĕ нимĕç салтакĕн Ганс Кюммелĕн сумкинче вăл арăмĕнчен илнĕ çырăва тата хăй Хĕвелтухăç фронтĕнчен киле янă çырусен копийĕсене тупнă. Октябрĕн 7-мĕшĕнче Ганс хăйĕн арăмĕ патне çапла ӳпкелешсе çырнă пулнă: «Эпĕ пыйтланса çитрĕм, пыйтăсем çисех яраççĕ. Çакă вăл выçă ларнинчен те асаплăрах тата пульăпа снарядран кая мар хăрушă. Пыйтăсем пире вĕçне çитиех çисе ярĕç, тесе салтаксем ахальтен мар калаççĕ. Эпир пурте хамăра-хамăр паллаймиччен сăнсăрланса çитрĕмĕр, пылчăкпа тусан тата çӳпçап ăшĕнче йăваланса пурăнатпăр. Малтанах çакна пурне те нимĕн шарламасăрах чăтса ирттертĕмĕр, халĕ ĕнтĕ нăйкăшма тата ĕçеклесех нăйкăшма тытăнтăмăр». Ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче Ганс хăйĕн арăмĕнчен каялла çыру илнĕ: «... Сана унта пыйтăсем çисе яраççĕ тетĕн эсĕ. Питĕ те хăрушă-çке вăл. Эпĕ сана акă мĕнле сĕнӳ паратăп: Эсĕ луччĕ таса çипуçан тăхăнса çӳре, хуралса çитнĕ çипуçпах çӳре. 1914 çулти вăрçăра пулнă ватă салтаксем каланă тăрăх, пыйтă вăл таса çипуçа юратать, теççĕ... Нăйкăшакан çынсем çинчен кунта пирĕн питĕ нумай сырма пуçларĕç.... Нумаях та пулмасть, Хĕвелтухăç фронтне кайма добровольцсем пухасси çинчен пĕлтерчĕç, анчах та кайма килĕшекеннисем тупăнмарĕç, нихăшĕ те çырăнмаççĕ».

* * *

Германипе Итали оккупанчĕсем Греци халăхне çаратаççĕ тата ирĕксĕрлеççĕ. Çавна хирĕç декабрĕн 8-мĕшĕнче Грецири тĕрлĕ районсенче 7 çĕрте халăх уççăнах хирĕç тăнă. Пирей сывăхĕнче рабочисемпе Италин жандармерийĕ хушшинче юнлă çапăçу пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ, çавăн чухне Италин 18 фашистне вĕлернĕ.

Январĕн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче халăх пурăнакан 15 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă тата противникăнне 47 оруди, 151 миномет, 13 пулемет, 200 велосипед, 22 ещĕк граната, 180 ещĕк патрон, пĕр пин ытларах снаряд, 40 километр тăршшĕ провод тытса илнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Козельск хулине йышăнса илнĕ чухне пирĕн боецсем противникăнне боеприпассем, продовольстви, обмундировани тата автомашинăсем тиенĕ 200 вагонтан тăракан 5 чугунçул эшелонне тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн летчиксем пĕр кун хушшинче противникăнне 240 автомашина ытла, рацин вырнаçтарнă автобуса, 23 танк, 6 оруди пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Савельев сержантăн отделенийĕ Троицкое ялĕ патĕнчи çапăçура 27 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Красноармеец Карев противникăн пулеметне икĕ граната ывăтса стройран кăларнă тата тăшман пулеметчикĕсене 4 çынна вĕлернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕсен групписем тунă ĕçсен итогĕсене пĕтĕçтернĕ. Совет паттăр патриочĕсем нимĕçсен 3 полковникĕпе подполковникне, 32 офицерне, 1120 салтакне тата фашистсен 91 шпионне вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем тăшманăн 5 самолетне, 2 танкне, 19 танкеткине, 157 грузовой машинине, темиçе орудипе пулемечĕсене тата ытти хĕçпăшалĕсене пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен 7 складне, горючин пĕр складне, продовольствипе фуражăн икĕ складне, чугунçулпа шоссе çулĕ çинчи 14 кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ тата аркатса тăкнă. Партизансем противникăн 14 поездне тăваиккинелле ӳпĕнтернĕ, çавăнта вара нимĕçсен тупăсем, танкеткăсем, автомашинăсем тиенĕ тата противник салтакĕсем ларса пыракан 200 вагонĕ ытла арканса кайнă. Нумай вырăнсенче телефонпа телеграф çыхăнăвĕсене пăснă.

* * *

Нимĕçсен 9-мĕш дивизийĕн 36-мĕш полкĕнчи 2-мĕш батальонран тыткăна лекнĕ радист Гейнц Крау допросра çапла каласа панă: «Пире хĕллехи ăшă тумтирсем паман, çавăнпа та шлем айĕнчен тăхăнмаллисене кивĕ чăлхасенчен тума лекет. Пирĕн дивизин 57-мĕш полкĕнчи пĕр салтак граждански тумтир тупнă та вăл çав тумтире тăхăнса лашапа тăван çĕршыва, Германие, тавăрăнасшăн пулнă. Анчах ăна Богуслав патĕнче тытса чарнă та суда панă. Çакăн пек тĕслĕхсем çинчен офицерсем пире час-часах каласа параççĕ тата çавăн пек ĕçсемшĕн пире хытă айăпламалла пуласси çинчен асăрхаттараççĕ. Кăçалхи çул Германире раштав праçникĕнчен панихида пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен нимĕçсен миллионшар салтакĕсене вырăссен сивĕ çĕрĕ çинче пытарса хăварнă. Ку таранччен чĕрĕ юлнă салтаксене те çавăн пек кун-çулах кĕтет».

* * *

Мускав облаçĕнчи Истра районĕнчи Павлово-Лужецкое ялĕнчен каялла чакнă чухне нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем 70 çулти колхозник И. Прохорова персе вĕлернĕ тата хĕрарăма унăн икĕ пĕчĕк ачипе пĕрле çунтарса янă. Нумай хĕрачасене ирĕксĕрлесе пусмăрланă.

* * *

Грозный хулинчи нефтяниксем, çулталăкри плана срокчен тултарса, çул шыва планран ытлашши 100-шер пин тонна нефть панă. Иванюков юлташ директор пулса тăракан нефтепе[...] гоннăй заводри коллектив паха со[...]лă бензин туса кăлармалли çулталăк планне 3 хута яхăн ирттерсе тулт[...]нă. Сарогрознефть трестĕнчи нум[...] рабочисемпе служащисем кăтарт[...]лăн ĕçлеççĕ. Лебедев, Татьяненко [...] та Салтыков юлташсен бригадис[...] кашни сменăра 4—5-шер норма [...]ваççĕ. Грознефтекомбинат промысл[...]сенче юлашки кунсенче халиччен [...]лемесĕр ларнă 30 скважинăна ĕçе я[...] Нефть кăларас ĕç ӳснĕçемĕн ӳ[...] пырать.

Январĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 1-мĕшĕнче фронтăн чыл[...] участокĕсенче пирĕн войскăсем, тă[...]ман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, м[...]лалла куçса пынă, халăх пурăнак[...] темиçе пункта, вăл шутра **Старица** х[...]лине, йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче нимĕçсенне [...] самолет пĕтернĕ. Пирĕн 4 самолет п[...]нĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен п[...]рĕн авиачасть декабрĕн 31-мĕшĕн[...] нимĕçсенне 4 танк, çар грузĕсем т[...]нĕ 151 автомашинăна, снарядсем тие[...] 34 лава, чугунçул çинчи горючи тулт[...]нă темиçе цистернăна пĕтерсе тăк[...] чугунçулăн виçĕ составне вут тивр[...] тата тăшман пехотин 2 батальонне [...] паласа янă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсен[...] пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, пр[...]тивника хирĕç вăйлăн çапăçнă хыççă[...] нимĕçсене халăх пурăнакан теми[...] пунктран çапса кăларнă, тăшман[...] салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çын[...] вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсенне 12 оруд[...] 20 станковăй пулемет, 5 миномет, [...] танк, 12 автомашина тата ытти çар [...]тералĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенч[...] пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, н[...]мĕçсем хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрс[...] пĕр кун хушшинчи çапăçусенче хал[...] пурăнакан 22 пункта йышăнса илн[...] тăшманăнне 76 оруди, 8 миномет, [...] пулемет, 150 автомат, 117 автомашин[...] 2.506 винтовка, минăсем шырамалли [...] прибор, нумай боеприпассем тытса и[...]нĕ, нимĕçсен 5 танкне, 15 орудине т[...] та 6 обозне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешеке[...] Александров юлташăн чаçĕнчи артил[...]леристсем пĕр каç хушшинче нимĕçсе[...]не минометсен 2 батарейине, пулеме[...]сен 2 точкине пĕтерсе тăкнă тата пр[...]тивник пехотин ротине вĕлерсе пĕте[...]нĕ.

* * *

Пирĕн чаçсене малалла кайма чар[...] тăракан фашистсен огневой точкисе[...] патне эскадрон командирĕ лейтенан[...] Кучерявый противник татти-сыпписĕ[...] персе тăнă хушăрах шуса пынă те[...] çав точкăсене гранатăсемпе путарс[...] лартнă. Кучерявый юлташ, тăшманăн[...] танкне асăрхаса, ун патне те вăрттă[...] шуса пынă, тăшманăн танкне противо[...]танковăй гранатăпа персе стройран кă[...]ларнă.

* * *

Германи салтакĕсем тылран илекен çырусенче ытларах та ытларах пă[...]шăрханни, шикленни палăрать. Обер-ефрейтор Вольфганг Гейне Варшаваран хăйĕн пиччĕшĕ Франц Гейне патне Хĕвелтухăç фронтне, çапла çырать: «Хулара сыпной тиф вăйлăн сарăлнă. Пирĕн салтаксенчен нумайăшĕсем чирлерĕç. Вырăнти халăх пире куравмасть. Кашни самантрах хамăра пĕрпĕр кĕтесрен вăрттăн çапса ӳкерессе кĕтсе пурăнатпăр. Кунта вăрçă тахçанах пĕтнĕ пулин те, Польшăра нимĕç салтакĕсем сахал мар вилеççĕ». Феликс Зелигер ефрейтора çапла çырса пĕлтереççĕ: «Польшăра тĕлĕнмелле ĕçсем пулса иртеççĕ. Кунта пире килĕштерекен пĕр çын та çук вĕт». Нимĕç унтер-офицерĕ Вальтер Райнбергер çумĕнче тупнă çырура çапла каланă: «Югославире партизансем вăрмансенче çӳреççĕ. Кашни эрнерех вĕсем нимĕç салтакĕсене е полицейскийĕсене вĕлереççĕ».

* * *

Нимĕç захватчикĕсенчен тытса илсе ирĕке кăларнă Плавск хулинчи çынсем çапла пĕлтереççĕ: «Плавскра нимĕçсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене тупса усрамашкăн лагерь тунă пулнă. Анчах çав лагерьте тыткăна лекнĕ красноар-

Малалли 2-мĕш страницăра

I. Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем Калуга хулине йышăнса илнĕ

Гудериан генерал поражени тӳсни

Пирĕн Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем нимĕçсен генерал-полковникĕн Гудерианăн иккĕмĕш бронетанковăй армине Тула патĕнче çапса аркатнă хыççăн, тăшманăн юлашкийĕсене хăваласа пĕтерсе пырса, татăклă наступлени туса пынă. Германи командованийĕ, пирĕн наступление тытса чарас тесе, резервсем илсе пырса, хăйĕн войскисене васкасах çĕнетсе йĕркеленĕ. Нара, Плотва тата Ока юханшывĕсем патĕнчи рубежсенче пулса иртнĕ вăйлă çапăçусем хыççăн Германин фон Клюге генерал-фельдмаршалĕ ертсе пыракан 4-мĕш армин çирĕплетнĕ позицийĕсене пирĕн войскăсем нумай çĕрте тата-тата кĕнĕ тата çав вырăнсене хӳтĕлесе тăнă тăшманăн войскисене татăклă поражени кӳнĕ. Пирĕн Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем çав çапăçусем вăхăтĕнче Германин 20-мĕш, 12-мĕш, 13-мĕш, 43-мĕш, 53-мĕш тата 57-мĕш армейски корпусĕсене çапса аркатнă,—çав корпуссен составне: 292-мĕш, 258-мĕш, 183-мĕш, 15-мĕш, 98-мĕш, 34-мĕш, 268-мĕш, 261-мĕш, 62-мĕш, 17-мĕш, 137-мĕш, 131-мĕш, 31-мĕш, 296-мĕш, 167-мĕш пехотнăй дивизисем, 19-мĕш танковăй дивизи тата Краковăран самолетсемпе куçарнă 2-мĕш СС бригади кĕнĕ пулнă. Пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе противник Хĕвеланăç еннелле чакать, çапăçусенче тата хăй каялла чакса пыракан çул çине противник хăйĕн аманнă салтакĕсемпе офицерĕсене, артиллерине, хĕçпăшалне тата ытти çар пурлăхĕсене пăрахса хăварать.

Наро-Фоминск, Угодски завод, Алексин, Таруса, Щекино, Одоево, Черепеть, Перемышель, Лихвин, Козельск хулисене тата çĕршер поселоксемпе ялсене противникран ирĕке кăларнă хыççăн пирĕн войскăсем, çапăçусем туса пырса, декабрĕн 30-мĕшĕнче Калуга хулине йышăнса илнĕ. Калуга хулинче пирĕн войскăсем пысăк трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсене шутласа тухас ĕç пырать.

II. Кăнтăр-Хĕвеланăç войскисем декабрĕн 7-мĕшпе 25-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса, Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем декабрĕн 7-мĕшпе 25-мĕш хушшинче противникран çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: орудисем—456, минометсем—163, пулеметсем—555, автоматсем—257, танксем—25, бронемашинăсем—7, автомашинăсем—1.479, мотоциклсем — 239, самолетсем—5, радиостанцисем—14, зенитнăй пулеметсен установкисем—29, минăсем—8.700 ытла, винтовка патронĕсем—700.000 яхăн, телефон кабелĕсем—173 километр тăршшĕ тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех тăшманăнне 56 танк, 8 бронемашина, 35 оруди, 10 самолет, 2.678 автомашина, груз турттарса пыракан лавсене 1.700 ытла тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсене пĕтерсе тăкнă.

Декабрĕн 7-мĕшпе 25-мĕш хушшинче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 20 пин çынна ытла вĕлернĕ тата амантнă. Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем халăх пурăнакан çĕршер пунктсене нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳн вĕçĕ

псем нумай пулман. Фашистсем та пуринчен ытларах хуларп халăх- çывăхри ялсенчи халăха хăваласа нă. Лагерьти çынсене кун каçиччен ĕмпе те икĕ çĕрулми çеç панă. Ла- ьте шыв пулман. Шыв ĕçес килсен, лагерьти çынсене юр çиме хушнă. Выçăпа, сивĕпе, хĕнесе асаплантарнипе кунсерен 25—30 çын вилнĕ. Сывмаррисене, халран кайнисене тата йывăр ĕç тума пултарайманнисене фашистсем пере-пере пăрахнă».

Январĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

нварĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле рĕн войскăсем противника хирĕç пур нтсенче те çапăçнă.

* * *

ИМĔÇ АВИАЦИЙĔ МУСКАВ ÇИНЕ ĔÇСЕ ПЫРСА ТАПАННИ ÇИНЧЕН ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ СУЙСА СУПĔЛТЕТНИ

Нимĕçсен командованийĕ Германи ацийĕ Хĕвелтухăçĕнче ăнăçлă ĕçсем ать тесе суя сводкăсем парассине йсен йăлине кĕртнĕ. Ку тĕлĕшпе олинри радио Гитлерăн çарĕ Совет озĕпе Германи хушшинчи вăрçă онтĕнче тĕр поражени хыççăн тепĕр ажени тӳсме пуçланă хыççăн уйах çине тăрса сухăрашать. Çапла, ахран, декабрĕн 28-мĕшĕнче нимĕç радио тăрăх: «пирĕн самолетсем ĕ те Мускав çине бомбăсем пăрассĕ», тесе пĕлтерчĕç. Декабрĕн 31-пĕнче гитлеровецсем радио тăрăх: нер Германи авиацин соединенийĕсем скав çине темиçе хутчен вĕçсе пыр тапăннă», тесе пĕлтерчĕç.

Гитлерăн пушă параппан çапаканни çакнашкал сводкăсемпе хăйсене ахла та кулăшла вырăна çеç лар- çĕ, мĕншĕн тесен çакăнта кăтартнă сенче «Германи авиацин соединением» «пысăккисем» те, «пĕчĕккисем» Мускав тĕлне, юлашки эрне хушнчи пекех, пачах та вĕçсе пыман. кабрĕн 30-мĕшĕнче нимĕçсен икĕ олетĕ столица патне вĕçсе пыма лакса пăхнă, анчах советăн зенит артиллерийĕ пеме тытăнсанах ем тарнă.

Нимĕç авиацийĕн пулман ĕçĕсем çин- суйса сӳпĕлтетсе, гитлеровецсем, вет Союзĕпе Германи хушшинчи çă фронтĕнчи хăйсен поражениййĕсе- пытарса, нимĕç обывателĕсене -çавах улталаса пыраççĕ-ха.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен нче Фирсов юлташăн боецĕсем, акан противника хăваласа пырса, кун хушшинче халăх пурăнакан пункта ирĕке кăларнă, нимĕçсенне пулемет, штабăн 13 çăмăл машинине 9 мотоцикл тата 110 велосипед тыт- илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче рĕн пĕр часть, противника пысăк атусем кӳрсе, 74 автомашина, 20 тоцикл, 23 оруди, 113 велосипед та- ытти тĕрлĕ нумай трофейăсем тыт- илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен ринче кĕрешекен пирĕн часть, çапă- емпе наступлени туса пырса, ни- сен салтакĕсемпе офицерĕсене 150 нна ытларах вĕлерсе пĕтернĕ, тăш- анне 2 танк, 30 ытла автомашина, енитнăй оруди, 1.200 снаряд, танк е пĕтермелли 500 мина, взрыв тăва япаласем тултарнă 60 ещĕк тата ти тĕрлĕ нумай çар пурлăхĕсем тыт- илнĕ.

* * *

Данилов юлташăн авиачаçĕнчи лет- сем чугунçул çинчи пĕр станцине та противникăн войскисем пухăнса вырăна вĕçсе пырса ăнăçлăн турмланă. Бомбăсем тĕл тивнипе та. пулеметсенчен пенипе чугунçул чи 10 вагона, пехота ларса пыракан автомашинăна, 2 бронемашинăна пĕтерсе тăкнă, противник салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Танкист-стрелок Зотов çапăçусенчен пĕринче нимĕçсенне танксене хирĕç пемелли 2 орудине, 76 миллиметрлă туппине пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн темиçе вуншар салтакне персе пăрахнă. Хăй аманнă пулин те, Зотов юлташ боеприпассем пĕтĕмпе пĕтиччен тăшман çине персе пынă.

* * *

Донбасри партизансем тăшмана хирĕç активлăн çапăçаççĕ. Г. юлташăн отрячĕ тăшманăн тылĕнче икĕ кĕпере сирпĕтсе янă та противникăн войскисем валли боеприпассемпе горючи илсе пырассине темиçе кунлăха чарса лартнă. И. ялĕн тулашĕнче партизан-разведчиксем, нимĕçсен бронемашини çине гранатăсем пăрахса, ăна экипажĕ-мĕнĕпех пĕтерсе тăкнă. А. ялĕ патĕнче засадăна пытанса ларса, отряд итальянецсен колонни çине пеме тытăннă та 23 оккупанта вĕлерсе пĕтернĕ. Çав кунах партизансем итальянецсен орудийĕ патĕнче хуралта тăракан салтака тыткăна илнĕ. Партизансем оруди пăсса çырмана тĕртсе янă та тыткăна лекнĕ салтака совет часĕн командирĕ патне илсе пынă. Нумаях та пулмасть Г. юлташăн отрячĕ итальянецсем йышăнса тăракан ял çине ăнăçлăн тапăннă. Партизансем, гранатăсем ыватса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 16 автомашинине, штаб автобусне, 2 тракторне тата 8 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 13-мĕш танковăй дивизин 93-мĕш мотополкĕнчи 3-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Панкрац допросра çапла каланă: «Юлашки вăхăт хушшинче кăна пирĕн ротăн личнăй составĕнчен 50 проценчĕ вилсе пĕтрĕ. Фронтри ĕçсем ăнăçсăр пулса пынă пирки салтаксен çапăçури хавхаланăвĕ палăрмаллах чакрĕ. Салтаксенчен нумайăшĕсем, малашне пулас çапăçусенчен пăрăнса юлас тесе, хăйсене хăйсем сывмар тесе пĕлтереççĕ. Çакăн пирки ĕнтĕ дивизи командованийĕ врачсене çапăçу умĕн салтаксене йышăнма тата вĕсене медицина тĕлĕшĕнчен мĕнле те пулин пулăшу пама чарса лартрĕ».

* * *

Фашистсене Масленко ялĕнчен хăваласа кăларса ярсан, ку ялта 8 хĕрарăмăн тата пĕр 14 çулти арçын ачан виллине тупнă. Хĕрарăмсене малтан пусмăрланă пулнă, унтан вĕлернĕ. Вĕсен сăмсисене каса-каса илнĕ, питçăмартисене касса пĕтернĕ. Пĕр хĕрарăмĕн хырăмне çурса пăрахнă.

* * *

Таммерфорсра (Финляндире) çăнăх çитмен пирки çăкăр пĕçерекен заводсемпе пекарьнăсем пурте ĕçлеме чарăннă. Хулари влаçсем халăха, паллă мар вăхăтлăха çăкăр пама чарăнаççĕ, тесе пĕлтернĕ. Çакăн пирки хулара массăллă пăлханусем пулса иртнĕ. Полици хулари çынсене нумай арестленĕ.

Хĕрлĕ Çар Керчь тата Феодосия хулисене йышăнса илни çинчен ютçĕршыв хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕш. (ТАСС). Кавказ фронтĕнчи войскăсен группи Хура тинĕс флочĕн тинĕс-çар вăйĕсемпе пĕрле чаплă çĕнтерӳ туни çинчен, Керчь хулипе крепоçне тата Феодосия хулине йышăнса илни çинчен пĕлтерни Англи общественноçĕн тĕрлĕ сийĕсен шухăш-кăмăлĕсене питĕ хавхалантарса çĕкленĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонри çынсем çапла калаççĕ: çак питех те паллă геройлă ĕç, нимĕçсен Хура тинĕсри паха базисене туртса илсе, Крымри лару-тăрăва тĕпренех улăштарасси патне илсе пымалла. Вырăссен Керчь проливĕ урлă каçма май килчĕ, пролив урлă нимĕçсем каçаймарĕç.

Хĕрлĕ Çар Керчьпе Феодосие йышăнса илни çинчен пĕлтернисем Англири радиопередачăсенче чи паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Пĕр паллă радиокомментатор хăйĕн черетлĕ радиопередачинче çапла каланă: вырăссен войскисем, Крымра питĕ паллă çĕнтерӳ туса, çĕнĕ триумф туса хучĕç. Германи çарĕ Крымра малалла куçса пынă вырăссемшĕн мĕнтери хăрушлăх пулса тăнине эпир пурте астăватпăр. Нимĕçсен Крым территорине пĕтĕмпех тытса илме май килнĕ пирки çак хăрушлăх татах та тарăна кĕрсе кайрĕ. Нимĕçсен Кавказа тытса илмелли планĕсене вырăс çарĕ нимĕçсене Ростовран хăваласа кăларнипе малтанхи хут аркатрĕ. Вырăссем Керчьпе Феодосие тытса илни ĕнтĕ нимĕçсен çав планĕсене иккĕмĕш хут пырса çапни пулать. Ку операци тинĕс-çар вăйĕсемпе типçĕр çинчи вăйсене пĕр-пĕринпе питĕ ăста пĕтĕçтерсе туса ирттернĕ. Керчь хулине йышăнса илни уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать,—тесе пĕлтернĕ радиокомментатор. Нумаях та пулмасть нимĕçсем çак хулана вăхăтлăха йышăнса илсен, стратеги тĕлĕшĕнчен вăл мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăнине каласа панăччĕ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 31-мĕш. Кавказ фронтĕнчи войскăсен группи Хура тинĕс флочĕн тинĕс-çар вăйĕсемпе пĕрле Керчь хулипе крепоçне тата Феодосия хулине йышăнса илни çинчен пĕлтернисене Америкăра тухса тăракан хаçатсем пĕрремĕш страницăри чи курăнмалли вырăнсенче пичетлесе кăлараççĕ. «Вырăссем Крымра стратеги тĕлĕшĕнчен питĕ паха икĕ пункта йышăнса илнĕ»,—тенĕ «Нью-Йорк таймс» хаçатăн çакăн çинчен çырнă статьян заголовокĕнче. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат Керчьпе Феодосие йышăнса илни çинчен çакăн пек заголовоклă статья пичетлесе кăларнă: «Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Крыма çĕмĕрсе кĕрсе Керчьпе Феодосие туртса илчĕç. Вĕсем малалла наступлени туса пыраççĕ».

Америкăри радио саракан кампанисем Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ çинчен питĕ усăмлă каласа ăнлантарса параççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 1-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерствин коммюникинче çапла каланă: «Филиппин утравĕсем çинче Японин войскисем фронтăн Çурçĕр-Хĕвелтухăç участокĕсенче хытăрах хĕссе пыма пуçланă.

Кабанатуан секторĕнче (Манилăран çурçĕр-Хĕвелтухăç еннерех) Японин наступлени туса пыракан чаçĕсене хирĕç Америка войскисем çаплах хытă çапăçаççĕ. Япони пехотипе наступлени туса пыма артиллери пулăшса тăрать.

Америкăн Филиппинри командованин коммюникинче çапла каланă: «Декабрĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле японецсем, Кабанатуан çине вăтам калибрлă артиллерирен персе тăрса, фронтăн пĕр миля сарлакăш участокĕнче наступлени туса пынă. Японин пысăк вăйĕсем Америка войскисен сылтăм флангĕ çине тапăнса пыраççĕ. Кунта японецсем аялтан вĕçекен бомбардировщиксемпе тата бронетанковăй вăйсемпе вăйлăн усă кураççĕ. Америка войскисем, противника пысăк çухатусем тӳстерсе, çаплах вăйлăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ.

Филиппин утравĕсем çинчи хĕçпăшаллă вăйсен командующийĕ генерал Макартур Манила районĕнче аманнă салтаксене госпиталь суднисемпе Австралие эвакуацилеме приказ панă.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕш. (ТАСС). Малайăн хĕвеланăç пайĕнче Англи войскисем Ипохăран кăнтăр еннерехри позицисене йышăнса тăраççĕ. Керакра Англи войскисемпе противникăн пысăк мар групписем хушшинче çапăçусем пулса пыраççĕ. Англи войскисен пĕр роти, артиллери пулăшса тăнипе, противникăн салтакĕсене 100 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ тата противникăн пысăках мар çар складне аркатса тăкнă. Англи войскисен çухатăвĕсем пысăк мар. Куантан районĕнче çапăçусем малалла пулса пыраççĕ.

Декабрĕн 30-мĕшĕнче Япони авиацийĕ Свитенхам порчĕ çине темиçе хутчен пырса тапăннă. Çар объекчĕсем пăртак сиенленнĕ. Аэродром çинче нимĕнле ишĕлтерӳсем те пулман.

Противник авиацийĕ Англи войскисен коммуникаци линийĕсем çине çаплах пыра-пыра тапăнма хăтланать. Противник тапăннинчен хăшпĕр сиенсем пулнă.

Иртнĕ каçхине Япони авиацийĕ Сингапур çине икĕ хутчен пырса тапăннă. Хăшпĕр çуртсене сиенленĕ тата вилнисемпе аманнисем 17 çын пулнă. Войскăсем хушшинче жертвăсем çук. Çар объекчĕсене сиен тăвайман.

Паян Англи авиацийĕ яланхи пекех разведкăллă вĕçевсем туса ирттернĕ тата патрульре çӳренĕ. Англи войскисен тĕп вăйĕсем, Саравакран ăнăçлă тухса кайса, Голланди Индийĕн Борнеоран хĕвеланăç енчи войскисемпе пĕрлешни çинчен калакан пĕлтерӳсем пур.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 1-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованин коммюникинче çапла каланă: «Япони самолечĕсем Голланди Индийĕн çыран хĕрринчи халăх пурăнакан пысăк мар пункчĕсем çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă тата автоматсенчен пенĕ. Тĕрлĕ районсенчен пĕлтернĕ тăрăх, японецсем пулă тытакан суднăсем çине те пулеметсенчен переççĕ. Япони миноносецĕсем Целебес утравĕн çурçĕр çыранĕ енчи Менадо хули çине персе тăнă, анчах пысăк ишĕлтерӳсемех тăвайман.

Декабрĕн 29-мĕшĕнче Борнео утравĕн Таракан сăмсахĕ çинчи аэродром çине икĕ хутчен вĕçсе пынă хыççăн, Голланди Индийĕн пĕр истребительне пĕтерсе тăкнă, самолет çинчи пилочĕ вилнĕ. Аманнисем пулман. Япони самолечĕсем Голланди Индийĕн танкерне атакăланă пулнă, анчах та танкер порта ăнăçлăн çитнĕ.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 1-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, Япони войскисем Малайя çыранĕн хĕвеланăç енĕпе малалла куçса пынă, декабрĕн 31-мĕшĕнче Куантан хулине йышăнса илнĕ. Куантан хули Сингапуртан 190 миля çурçĕр еннерехре ларать.

Югослави партизанĕсем нимĕçсене хирĕç çĕнĕрен вăйлă контратакăсем пуçласа янă

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Анкарари корреспонденчĕ ютçĕршывсенчи çар çыннисенчен илнĕ хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: Югослави партизанĕсем юлашки вăхăтра нимĕçсене хирĕç вăйлă контратакăсем пуçласа янă. Хыпарсем çитнĕ тăрăх, Савăпа Дрина юханшывĕсем хушшинчи районра вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Çавăн пекех партизансем Чачак, Ужице, Шабат, Трап хулисем таврашĕнче те вăйлă атакăсем тума чарăнмаççĕ. Жечка патĕнче пулса иртнĕ çапăçура нимĕçсем 3—4 ротăна яхăн çухатнă, çакăн хыççăн вĕсем Чачакран хĕвелтухăç еннелле чакса тăнă. Германи войскисен тепĕр колонни Шабат патĕнче пысăк çухатусем тӳснĕ. Хальхи вăхăтра нимĕçсен çак колонни те каялла чакать. Партизансене хирĕç пĕр чарăнмасăр хыттăн çапăçма лекнĕ пирки тата хĕллехи çанталăк сивĕ тăнине пула, нимĕçсем пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Германи çарĕсен шухăш-кăмăлĕ палăрмаллах ӳксе пырать. Партизансем нимĕçсен нумай патрулĕсене сăртсем çинелле хăваласа янă та, вĕсем унта йăлтах шăнса вилнĕ. Партизансем оккупантсен обозĕсене тата склачĕсене пĕтерсе пыраççĕ, çакна пула Германи войскисем ĕçме-çимелли çитменнипе хытă аптăраççĕ. Çак хушăрах чугунçулсем çинче те татти-сыпписĕрех саботажла ĕçсем туса пынипе, çулсем тăрăх Германин войскăсемпе хĕçпăшал турттаракан эшелонĕсем чарăна-чарăна тăраççĕ.

Венгри хаçачĕсем Румыние хирĕç кампани пуçласа янă

СТАМБУЛ, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Румыни влаçĕсем венгерецсене хирĕçле сăмахсем тухса каланă пирки Венгри хаçачĕсем румынсене хирĕç вăйлă кампани пуçласа янă. Çавăн пек Венгри хаçачĕ «Пестер Ллойд» румынсене хыттăн вăрçса çырнă статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра Румыни влаçĕсене вĕсем Çурçĕр Трансильванне пĕтĕмпех чухăнлатса хăварса Венгрие пачĕç, тесе айăплаççĕ. Çак статьяра каланă тăрăх, румынсем Çурçĕр Трансильвани облаçĕнчен мĕнпур продовольстви запасĕсене, выльăх-чĕрлĕх апачĕсене тата ытти мĕн турттарса кайма май пулнине çавсене йăлтах илсе кайнă, илсе кайма май пулманнисене пĕтерсе хăварнă. «Çакна пула венгерецсем, — тесе çырать хаçат, — пĕтĕмпех çаратса хăварнă пушă облаçе кăна пырса кĕчĕç. Румынсем хăйсем Трансильванирен тухса кайиччен кивĕ чикĕ районĕнчи чугунçулсене те йăлтах пăсса хăварнă».

Çак вăхăтрах Венгрипе унăн тепĕр кӳрши — Словакия — хушшинчи лару-тăру та пăсăлать. Венгрире словаксене хĕсĕрленĕ пирки, словаксен хаçачĕсем Венгрие хирĕç хытă вăрçса çыраççĕ. Çакна пула Венгри хаçачĕсем те Словакие хирĕç çыраççĕ. Венгри хаçачĕсем словаксене вĕсем кăнтăр районсенче пурăнакан венгерецсене хĕсĕрлеççĕ, тесе айăплаççĕ.

Румыни влаçĕсем халăхран ăшă тумтирсене туртса илеççĕ

АНКАРА, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Румынирен пынă çынсем çапла пĕлтереççĕ: Румыни влаçĕсем çар валли ăшă тумтире халăх хушшинче малтан ирĕклĕн паракансенчен çеç пуçтарнă пек тунă, халĕ ĕнтĕ, нимĕçсем хушнипе, çав ăшă тумтир таврашне халăхран çаратсах пуçтараççĕ. Румынсем хăйсен ăшă япалисене нимĕçсене парасшăн мар, çакна пула румын салтакĕсем килрен киле çӳресе ухтарусем тăваççĕ. Ăшă кĕпе-йĕм, урана тăхăнмалли тата ăшă тумтир тупăнсан, вĕсене пĕтĕмпех ирĕксĕрех илсе тухса каяççĕ. Харпăр хăйĕн ăшă япалисене нимĕçсене парасшăн мар тăракан çынсене çавăнтах арестлесе концентрациллĕ лагере яраççĕ. Бухарест хули урамĕсенче Румыни полицейскийĕсем çынсем çийĕнчен тумтир хывса илнисене кăнтăр кунĕнчех курма пулать.

Ютçĕршыв хроники

● Рузвельт тинĕс хĕррисенче укрепленисем тумашкăн тинĕс министерствине 310 миллион доллар памалли закона алă пусса çирĕплетнĕ. Çак шута Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тулашĕнчи базăсене аслăлатма тата лайăхлатма панă 75 миллион доллар та кĕрет.

● «Дагенс Нюхетер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтсенче Тронхеймра (Норвегире) 100 норвежеца, çав шутра темиçе врача арестленĕ. Çак арестсене хулари паллăрах çынсенчен нумайĕшĕ Квислинг Тронхейма пынă ятпа тунă уява хутшăнманнипе çыхăнтараççĕ.

Çĕнĕ çул ячĕпе парнесем ячĕç

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕнче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕ çул ячĕпе парнесем туянма 1253 тенкĕ ытла укçа пухнă. Пухăннă укçапа 25 тĕрлĕ паха япаласем илсе, 3 ещĕке тултарса посылка ячĕç. Посылкăна 5 килограмм конфета, 5 килограмм печени, 4 домино, 27 алшăлли, 45 мăшăр чăлха, 15 кĕленче одеколон, 25 катăк супăнь, 25 штука шăл тасатмалли щеткăпа порошок, табак тултарнă 35 енчĕк, пирус, карандашсем, тетрадьсем, 30 сăмса тутри хунă.

Н. КОНДАКОВ.

* * *

Чăвашторгăн Канашри отделенийĕнче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне çĕнĕ çул ячĕпе 10 кило печени, 5 кило сухари, 8 кило конфета, 100 пачка махорка, 30 катăк супăнь, 50 мăшăр чăлха, 40 сăмса тутри тата çыру чиксе посылка ячĕç.

Çĕнĕ çул парнисене редакципе типографире тата текстильсбыт конторинче ĕçлекенсем те янă.

Т. ИВАНОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Районри чылай шкулсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕ çул парнисем пухас ĕçе организацилерĕç. Мускав патĕнче нимĕç войскисене çапса çĕмĕрнипе хавхаланнă учительсемпе вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем пачĕç. Боецсем валли тăхăнмалли ăшă кĕпейĕмсем тата çимелли продуктсем ярса пачĕç.

Етĕрнери вăтам шкулти учительсен коллективĕ тулă çăнăхĕ, çу, пыл, сĕт пухнă, учительница Абакумова юлташ вĕсенчен печенисем пĕçернĕ. Пĕр пăт печение вĕсем çĕнĕ çул ячĕпе парнесем пухакан склада кайса панă. Учительница Никитина боецсем валли 4 кĕнеке, 3 сăмса тутри, Г. Степанова юлташ пĕр мăшăр чăлха, 2 сăмса тутри тата пĕр кĕленче одеколон, В. Гущина табак тултарнă енчĕк, шăл тасатмалли щеткăпа порошок панă. Çĕнĕ çул парнисем пухасси Палтайри вăтам шкулти учительсем хушшинче те аван иртнĕ. Учительсем парнесем илме уйăхри ĕçукçин 15 процентне панă. Кунсăр пуçне шкулта 5 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 2 пурçăн шарф, 5 мăшăр алшиш тата чăлхасем пухнă.

Завуч Храброва боецсем валли алшăлли, супăнь тата пĕр мăшăр чăлха, вăрçă ĕçне вĕрентекен Орлов юлташ 2 пачка махорка, пĕр çыхнă кĕпе панă. Шкулти учительсем пурте çĕнĕ çул парнисем пухас ĕçе хутшăннă.

В. ЛАЗАРОВ.

Йĕлтĕрçĕсен иккĕмĕш ăмăртăвĕ

ИШЛЕИ. Декабрĕн 20-мĕшĕнче Ишекри «Большевик» промысла артелĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем вăтам шкулта вĕренекенсемпе пĕрле йĕлтĕрсем çине тăрса иккĕмĕш хут ăмăрту туса иртерчĕç.

Йĕлтĕрçĕсен йышĕ ӳссех пырать. Иртнĕ ăмăртăва 29 çамрăк хутшăннă пулсан, хальхи ăмăртура 92 çамрăк пулчĕ. Вĕсен шутĕнче 25 комсомолец, осоавиахим членĕсем 35 тата 25 пионер.

Арçынсем 3 километрлă дистанци илнĕ. Çав дистанцине комсомол пуçламĕш организаци секретарĕ В. Самарин 18 минутăра тухса, ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ун хыççăн 18 минутта 12 секундăра И. Илюхина çитнĕ. 3-мĕш, 4-мĕш вырăнсене А. Кириллов, В. Петров комсомолецсем йышăнчĕç.

Ăмăртура хĕрачасем те пулнă. Вĕсем 2 километрлă дистанцине кайса килнĕ. Чи малтан, 18 минута хушшинче В. Кудрявцева çитрĕ, ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче мала тухнисене премисем памалла тунă. Хĕллехи каникул вăхăтĕнче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне шкулта туса ирттереççĕ. Çамрăксем ăмăрту иртнернипе пит кăмăллă юлчĕç. Çавăн пек ăмăртусене канмалли кунсенче час-часах туса ирттерме йышăнчĕç.

И. МАРКОВ.

Вăрман лартса ӳстерес ĕç

Революци пуличчен Чăваш республикинчи вăрмана йĕркесĕр ватса пĕтернĕ. Выçă капиталистсем вăрмана кварталĕ-кварталĕпе касса пĕтернĕ. Вăрман пушарсемпе, йĕркесĕр каснипе те нумай пĕтнĕ.

Совет влаçĕ пуçлансан, вăрман халăх пурлăхĕ пулса тăчĕ. Халĕ вăрман пурлăхне йĕркеллĕ сыхласа усраççĕ. Вăрман касас ĕçе тĕрĕс организациленĕ.

Кировски вăрман хуçалăхĕн даннăйĕсем тăрăх, вăрманта пушар пулассине пĕтĕмпех пĕтернĕ. Çавăн пекех вăрмана йĕркесĕр касса ватас ĕçе те чарнă.

Чăваш республикинчи вăрман хуçалăхĕсем йывăç лартса ӳстерес плана 115 процент пурнăçланă. Йывăç лартассипе акассине уйрăмăнах Сĕнтĕрвăрри тата Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕсем лайăх пурнăçларĕç. Вĕсем вăрман лаптăкне сарас тĕлĕшпе чылай ӳсĕмсем турĕç.

В. М.

Колхозсем уйра юр тытаççĕ

ÇĔРПУ. «Красный самолет» колхоз кунсенче 5 гектар çине юр тытса юлма щитсем кăларса тăратрĕ. Уйра юр тытса хăварма «Радио», «Броневик», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те тытăнчĕç.

Г. П.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ГОССТРАХ СССР

ВКЛЮЧАЙТЕСЬ В КОЛЛЕКТИВНОЕ СТРАХОВАНИЕ ЖИЗНИ ПО МЕСТУ РАБОТЫ.

СТРАХОВАНИЕ ПРИНИМАЕТСЯ В 5000, 4000, 3000, 2000, 1000 И 500 РУБЛЕЙ НА КАЖДОЕ ЛИЦО, ПО ЖЕЛАНИЮ КОЛЛЕКТИВА.

СТРАХОВЫЕ ВЗНОСЫ УСТАНОВЛЕНЫ В РАЗМЕРЕ 12 РУБЛЕЙ В ГОД ЗА КАЖДУЮ ТЫСЯЧУ РУБЛЕЙ И УПЛАЧИВАЮТСЯ СБОРЩИКУ КОМСОДА ВПЕРЕД ЗА КАЖДЫЙ КВАРТАЛ.

ЗА СПРАВКАМИ ОБРАЩАТЬСЯ В РАЙОННЫЕ И ГОРОДСКИЕ СТРАХОВЫЕ ИНСПЕКЦИИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйĕн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф 6. 58 84 п. л.